# АСАМЛӐ ТӖРӖ





Пирӗн шкула хӑна килчӗ. Хӑй ватӑ ӗнтӗ, сӑн-пичӗ вара хӗвел пек ҫиҫет. Кам-ши ку?

Тӗл пулу вӑхӑтӗнче шкул директорӗ акӑ мӗн каларӗ:

– Анна Авдеевна пирӗн шкулта ӗҫленӗ. Хӑйӗн мӗн пур пултарулӑхне, вӑйхалне, ӑс-хакӑлне ачасене панӑ. Сирӗн учительсене те вӑл вӗрентнӗ.

*Мария АРЛАН*

Унтан хисеплӗ хӑна сӑмах илчӗ:

– Ватӑлсан манӑҫ тусанӗ пусать пуль. Хальхи ачасем мана, тен, палламаҫҫӗ те. Манӑҫа сирме мӗн кирлӗ? Туслӑ хутшӑну кирлӗ. Пурнӑҫ никӗсӗ – ас тӑвӑмра.

Вӑл пире тӗлӗнмелле истори каласа пачӗ:

– Вун-вун икӗ ӗмӗр каялла Евразире чи малтанхи патшалӑх – Атӑл ҫи Пӑлхар ҫӗр-шывӗ йӗркеленнӗ. Унта шкулсем те ӗҫленӗ. Ачасем вӑл вӑхӑтра та сирӗн пекех тӗрлӗрен хӑнӑхтару ҫырнӑ, задачӑсем шутланӑ. Руна ҫырулӑхӗ пулнӑ...

– Мӗнле ҫыру вӑл? – ыйтрӗҫ темиҫен харӑс.

– Пиктографи паллисемпе шухӑша уҫса пани. Ӳкерчӗклесе кӑтартни, – пулчӗ хурав.

– Халӗ вӑл ҫырулӑх пур-и? Вӗренесчӗ, вуласчӗ ӑна, – ӗмӗтленчӗҫ ачасем.

**Игра - мультик "Медвежонок"**

*Разрежь по линии, полоску накрути на карандаш или ручку и двигай снизу вверх и наоборот.*



– Ҫухалнӑ ӑс-пурлӑха тавӑрма май килекенччӗ. Анчах шута илӗр: вӑхӑт – анаталла юхнине, ӗмӗт тӑвалла талпӑннине юрататать. Вуласа пӑхӑрха, – терӗ те Анна Авдеевна хул пуҫҫийӗ ҫинчи ҫӳҫеллӗ пысӑк тутӑрне илчӗ.

Акӑ мӗн курӑнчӗ куҫа: шӑрҫа тӗрӗллӗ шурӑ кӗпе, вӗл-вӗл чечеклӗ. Вӗсем тӗрлӗрен: тӗмпӗл-тӗмпӗл тӑваткал, хумлӑ-хумлӑ ҫаврака, ярӑм-ярӑм кукӑрӑлчӑк...

Вӑт ку ҫыру! Мӗн каласа ҫырнӑ-ши? Эпир ҫыру паллисене чылайччен тишкертӗмӗр. Вулама сӗмлентӗмӗр. Тавлашрӑмӑр та. Юлашкинчен ватӑ вӗрентӳҫӗ каланӑ шухӑшпа пурте килӗшрӗмӗр: "Ҫухалнӑ ӑс таврӑнать, вӑхӑт таврӑнмасть". Хӑна пирӗнпе сыв пуллашрӗ, татах килме сӑмах пачӗ. Ас тӑвӑм ҫиппи ан татӑлтӑр тесен асамлӑ тӗрре вуламаллах.

*Николай Ишентей*